Пенсисемпе тивĕçтерес ыйтусемпе

# Тӳлев илекенсем йышланчĕç

РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх, аслă ăру çыннисене тата инвалидсене пăхнăшăн компенсаци тӳлевĕ ыйтакансен йышĕ кăçал Чăваш Енре чылай ӳснĕ.

Ăна тивĕçекенсем нумайланни укçа тӳлевне пысăклатнипе те çыхăннă. Маларах ку сумма уйăхне 120 тенкĕ пулнă, 2007 çулта – 500, 2008 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 1200 тенкĕне çитнĕ (РФ Президенчĕн кăçалхи çу уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 774-мĕш Указĕ тăрăх).

Унсăр пуçне асăннă документ компенсаци тӳлевне памалли йĕркене улшăну кĕртнĕ: граждансем темиçе тӳлев – хăйсем пăхса тăракан кашни инвалидшăн е ватăшăн – йĕркелеме пултараççĕ. Çавна май Пенси фондне граждансенчен икĕ е виçĕ çынна пăхнăшăн тӳлеве тивĕçме заявлени ытларах килме тытăннă.

Уйăхри компенсаци тӳлевне ĕçсĕр шутланакан вăй питтисен (енчен те вĕсем пенси илмесен) пĕрремĕш ушкăн инвалидне (ĕçлеме пултараслăх степенĕ кун пек чухне пĕлтерĕшлĕ мар); сиплев учрежденийĕ çирĕплетнипе пăхса пурăнакан кирлĕ тесе палăртнă ватă çынна (арçынсем – 60, хĕрарăмсем 55 çул тултарсан);

80 çула çитнĕ ватăсене (сиплев учрежденийĕн çирĕплетĕвĕ кирлĕ мар);

18 çула çитмен сусăр ачана пăхса пурăннăшăн тивĕçме ирĕк пур.

Компенсаци тӳлевне ĕçлеме пултарайман гражданинăн пенсийĕ çумне ăна пăхса усранă вăхăтшăн хушса параççĕ. Патшалăх пулăшăвне тивĕçес тесен РФ Пенси фончĕн районти управленине пымалла.

# Пенсисем пирки тĕплĕнрех

Федерацин 2008 çулхи утă уйăхĕн 22-мĕшĕнчи 156-мĕш саккунĕ малалла ĕçлекен çар пенсионерĕсене иккĕмĕш пенси гарантилет. Асăннă документ çавăн пекех патшалăх тата муниципалитет служащийĕсене – нумай ĕçленипе пенсие тухнисене – пырса тивет: вĕсене пенси памалла тунă хыççăн ĕçленĕ тапхăршăн пенсин страховани пайне çĕнĕрен шутласа парас вырăнне ĕç пенсийĕн страховани пайĕн уйрăм виçине çирĕплетсе пама пултараççĕ.

Ватлăхри ĕç пенсийĕн страховани пайне (ĕç пенсийĕн страховани пайĕн уйрăм виçине) çирĕплетме ыйтса çырнине нумай çул ĕçленипе е федерацин 1993 çулхи нарăсăн 12-мĕшĕнчи «Çар службинче, шалти ĕçсен органĕсенче, пушара хирĕç кӗрешекен службăра тăнă, наркотик хатĕрĕсемпе психотроплă япаласен çаврăнăшне контрольлекен органсенче, уголовнăй айăплава пурнăçлакан органсенче службăра тăнă çынсене тата вĕсен çемйисене пенсипе тивĕçтересси çинчен» саккунĕпе инвалида тухнипе пенси илекен çар çыннисем (призывпа çар службине чĕннĕ, салтаксемĕр, матроссемсĕр, сержантсемсĕр, старшинасемсĕр пуçне) тата ватлăхри ĕç пенсийĕн ирĕкĕ пуррисем Раççей Пенси фончĕн вырăнти управленине пыма пултараççĕ.

Ĕç пенсийĕн ирĕкне тивĕçмелли услови – пенси ӳсĕмне çитни (арçынсемшĕн – 60 çул, хĕрарăмсемшĕн – 55 çул) тата страховани стажĕ 5 çулран кая мар пулни (унта инвалид пенсийĕ памалла тăвичченхи служба вăхăчĕ тата службăн, ĕçхĕлĕн ытти тапхăрĕ, нумай çул ĕçленипе тивĕçнĕ пенси виçине палăртма тĕпе хуни кĕмеççĕ).

Федерацин, Раççей субъекчĕсен нумай çул ĕçленипе пенси илсе тăракан тата 5 çуллăх страховани стажĕ пур патшалăх служащийĕсем, муниципалитет служащийĕсем, енчен те вĕсем пенси памалла тунă хыççăн календарьлĕ тулли 12 уйăх ĕçленĕ пулсан, страховани пайне çĕнĕрен шутлаттарас вырăнне нумай çул ĕçленипе пенси çумне ĕç пенсийĕн страховани пайĕн уйрăм виçине илмелли ирĕке тивĕçеççĕ.

**РФ Пенсии фончĕн районти управленийĕ.**

Тĕл пулу

# Пурте кăмăллă юлчĕç



*Августăн 5-мĕшĕнче Каршлăхри ветерансен çуртĕнче пурăнакансем патĕнче Йӳçкасси ял тăрăхĕнче пурăнакан вăрçă-па ĕç ветеранĕсем хăнара пулчĕç. Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи ветерансем хушшинче кунти ваттисен çуртне мĕнле вырнаçасси пирки ыйтакансем те пулчĕç. Вĕсене пирĕн патра питĕ килĕшрĕ.*

*Унтан вара арçынсен вырăнти мăнастырĕн послушникĕ ветерансене мăнастыре хăçан туса лартни, унăн аталанăвĕ пирки каласа пачĕ. Кайран мăнастыре илсе кĕртсе кăтартрĕ.*

*Ветерансем çумăр çунине пăхмасăрах çветтуй шывра çăвăнса тухрĕç. Шăмшак çакăн хыççăн питĕ çăмăлланчĕ текенсем те пулчĕç.*

*Çак тĕл пулăва йĕркеленĕшĕн манăн Йӳçкассинчи ветерансен Канашĕн председательне Зиновий Михайлович Кутузова пысăк тав сăмахĕ калас килет. Татах килĕр пирĕн пата хăнана. Хуçалăх ертӳçине Платон Павлович Давыдова та автобуспа тӳлевсĕр тивĕçтернĕшĕн пысăк тав сăмахĕ.*

**В. КРЮЧКОВА,**
**Каршлăхри ваттисен çурчĕн культоргĕ.**

Ял çыннисемпе тĕл пулма

# Оринин тăрăхĕнче пулчĕç

Район хаçатĕнче пичетленнĕ графикпа килĕшӳллĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн, социаллă пулăшу паракан центрĕн, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн специалисчĕсем августăн 14-мĕшĕнче Оринин ял тăрăхĕнче пулчĕç. Ватă çынсем, çамрăк хĕрарăмсем Оринин ял тăрăх администрацийĕн кану пӳлĕмне 10 сехете пуçтарăнчĕç.

Тĕл пулăва ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.С. Суриков уçрĕ. Малтанах РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн ертӳçи Е.М. Александрова ĕç пенсийĕн шайне ӳстерессипирки çĕнĕ программăпа паллаштарчĕ. Унтан районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова нумай ыйтусем çине хуравларĕ. Вăл пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлеме субсиди уйăрса парасси, ача-пăча пособийĕсем пирки, ĕç ветеранĕсене, тыл ĕçченĕсене, инвалидсене тата граждансен ытти категорийĕсене паракан çăмăллăхсем пирки тĕплĕн те ăнланмалла каласа пачĕ. Кашни ватă çынпа уйрăм калаçрĕ. Нина Пантелеевна хăйĕн ăшă куллипе, çепĕç сассипе, ырă кăмăлĕпе ватăсене савăнтарчĕ.

Социаллă пакет илес мар текеннисем заявленисем çырчĕç. Ку анчах мар. Тĕл пулура ыйтусем çине хуравланă хыççăн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн тата социаллă пулăшу паракан центрĕн специалисчĕсем Надежда Васильева, Надежда Арапкина, Юлия Пугачева, Света Любимова, Оля Яковлева концерт лартса пачĕç. Вĕсем Юрий Жуков çырнă юрăсене шăрантарчĕç. «Ӳкеççĕ çулçăсем» тата Света Любимова юрланă «Пĕр сана савас килет» юрăсем пурне те килĕшрĕç. Концерт программине Ю. Жуков ертсе пычĕ.

Концерта çак юрă сăмахĕсемпе вĕçлерĕç, хăйсем Атапайри тата Мулкачкассинчи ĕç çыннисемпе тĕл пулăва васкарĕç:

«Улма сулхăнра ӳсмест,
Çырла хĕвелсĕр пиçмест.
Ĕмĕр пĕрле пурăннине
Нимĕн те çитмест».

**Ватă çынсем ыйтнипе**
**Чамăш ялĕнчи**
**В. ВЕРШКОВА.**

Вулакан пултарулăхĕ

## Тӳпере виç хĕвел

Тӳпере виç хĕвел.
Чĕлтĕрти юр пĕрчи
Ирĕлмест пит çинче.
Юмахри шур тĕнче
Тыткăнлать куççене.

Тӳпере виç хĕвел.
Сывлăш чăнкăр пăрланнă.
Çӳçенсе сивĕпе
Юмахри хĕр-пике –
Хурăн хулăн пасарнă.

Тӳпере виç хĕвел.
Ăшăтмаççĕ теме.
Ах, ытла та хитре
Тĕлĕрет сив тĕнче
Кĕмĕл пас айĕнче.

Тӳпере виç хĕвел.
Виççĕн виçĕ тĕлте.
Сивĕ-сивĕ хăйсем.
Тен çак сив илеме
Хуралласçĕ çӳлтен.

**Марпи МАТРОСОВА.**

Çĕнĕ кĕнеке

# Чăн-чăн ял çыннине сăнланă




Çак кунсенче Чăваш халăх академикĕн Н.Л. Яковлевăн виççĕмĕш кĕнеки пичетленсе тухрĕ. «Кун-çул эрешĕсем» ятлă вăл.

Николай Лукича районта пĕлмен çын çук та тӳрех кĕнекине пахалама пуçлар.

Автор яланах ахаль çын çинчен çырма тăрăшрĕ. Вăл çĕр çинче чакаланакан ял çыннисем, вăрçăпа ĕç ветеранĕсем çинчен каласа пачĕ. Сурăм тăрăхĕнче ачаран пĕрле ӳснĕ сахал мар ентеш çинчен юратса çырчĕ вăл. Илер, акă, çĕнĕ кĕнекери «Елень аки» тĕрленчĕке. Сăмах кунта Патаккаси ялĕнчи Елена Михайловна Егорова пирки пырать. Йӳçкасси пульницинче 28 çул хушши санитаркăра ĕçленĕ вăл. Çапла аса илет Елень аки: «1949 çулхи авăн уйăхĕнче чиркӳ çуртĕнчен пульница тума пуçларăмăр. Пирĕн пата çар врачĕ пулнă А.Е. Алексеев ĕçлеме килчĕ. «Пульницăна хамăр вăйпах тумалла пулать», - терĕ... Пульницăна 1951 çулхи ака уйăхĕнче уçрĕç, уçнă кун пирĕн пата Чăваш АССР сывлăха сыхлас ĕç министрĕ, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕ тата чăваш халăх писателĕ Петр Николаевич Осипов килчĕ, ырă сăмах каларĕ. Чи малтанах чирлисем стационара «чиркӳ вырăнĕ - çветтуй вырăн» тесе сипленме килмесĕр тăчĕç. Çапах та ăнлантарсан - ӳкĕтлесен Актайран Е. Прохорова, Вăрманкас Сурăмран М. Яковлевапа В. Семенов килсе выртрĕç».

Николай Лукич çитменлĕхсемпе таса мар çынсене те курмасăр иртмерĕ. Пĕлекенсем çинчен çырнă чухне çапла тума çăмăл мар. Илер кĕнекери «Йĕксĕк» тĕрленчĕке. Вăрçă вăхăтĕнче Хурăнкасси ялĕнче колхоза Тари ятлă хĕрарăм ертсе пынă. Сахал мар çынна макăртнă вăл. Выçă ял çыннисем çĕрĕк паранкă пуçтарса килсен миххине тытса илленĕ, мăйăр татсан хутаçне тавăрса силленĕ, кăмпа татса пуçтарсан ăна та кăларса пăрахнă. Чăн йĕксĕкех пулнă. «1943 çулхи октябрьте район центрĕнчен икĕ чиновник тем ĕçпе килнĕ. Вĕсене Тари - пуçлăх Çемен карчăкĕ патĕнче аванах хăналанă. Ун хыççăн Тарипе тепĕр хĕрарăм çав чиновниксемпе типĕ çулçă тултарнă сарайне савăшма-алхасма кĕрсе выртнă. Пĕр арçынĕ, ӳсĕрскер, пирус чĕртнĕ те шăрпăкне сӳнтермесĕрех çумне пăрахнă. Çулçă типсе кайнă, хĕрлĕ автан алхасма пуçланă, Çемен карчăкĕн тата кӳршĕри Пухвир Антончăн кил-çурчĕсенчен кĕл купи кăна тăрса юлнă.

Тари кунта та айăпласран çăлăнса юлнă. Вăл Мирун старикне çапла калама хушнă следствире: «Унта пĕр хĕрарăм мĕкĕлтетнине куртăм, вăл Васçли Егорчăн арăмĕ полчĕ полмалла». Çавна пула айăпсăр хĕрарăма милици уйрăмне тытса кайнă»,- çырать автор.

«Йӳçкассинчи чиркӳ» очерк та интереслĕ. Вулатпăр: «Акă, умра Чăваш Республикин тĕп архивĕнче упранакан «Справочная книга Казанской епархии» ятлă хулăн кĕнеке (Казань.1904). Унта çапла çырнă: «Йӳçкасси сали. Йывăçран 1898 çулта Давид Вульфович Высоцкий купса укçипе Çветтуй Николай Чудотворец ячĕпе пĕр престоллă чиркӳ туса лартнă. Хусан хулинчен 160, Етĕрне хулинчен 40 çухрăмра. Прихутра: Çĕнĕ Матьăк, Кивĕ Матьăк, Раккаш, Илпеш, Патаккасси, Çĕмĕрткасси, Тури Панкли тата Вăрманкас ялĕсем. Пĕтĕмпе 328 кил, 743 арçын тата 633 хĕрарăм. Земски шкул ĕçлет, унта 33 арçын ача тата 9 хĕр ача вĕренеççĕ.

Священникăн – 300 тенкĕ, псаломщикăн – 100 тенкĕ ĕç укçи. Усадьба çĕрĕ 2 теçеттин...

Чиркĕве октябрĕн 12-мĕшĕнче светить тунă. Çав çулах кунта пĕрремĕш венчете Вăрманкасри Мартын Павлович Павлов çамрăк хресчен хăйĕн мăшăрĕпе тăнă».

Çапла вара кăçал Йӳçкасси чиркĕвĕ 110 çул тултарать. Кунта чиркĕве çĕнĕрен чĕртессипе паян çине тăрса ĕçлеççĕ.

Кĕнекере очерксем, калавсем, аса илӳсем пичетленнĕ. Вĕсене вуланă май хама Сурăм тăрăхне таврăннăн туйрăм.

Сумлă ватă алă усса лармасть. Апла пулсан «Кун-çул эрешĕсем» авторăн черетлĕ кĕнеки пулнине ĕненсе тăрăпăр.

Çĕнĕ кĕнеке пысăк мар тиражпа тухнă. Ăна Муркашри кĕнеке лавккинче туянма пулать.

**А. ИВАНОВ.**